Паян Раççейре Ăслăлăх кунне паллă тăваççĕ. Ачасене халĕ шкултах наука ĕçне явăçтарма тăрăшаççĕ. Вĕренекенсем хăйсен тĕпчевĕсемпе конференцисенче тухса калаçаççĕ. Ăслăлăхпа çунатланма пăрахманнисем студент чухне те аталанма чарăнмаççĕ. Диплом илсен аспирантурăна вĕренме кĕреççĕ. Наука сукмакне такăрлатакан çамрăксен шухăш-кăмăлне пĕлме тĕв турăм. Вĕсене ăслăлăхри ĕçĕсемпе паллаштарма сĕнтĕм.

Татьяна МИХАЙЛОВА, ЧР Çамрăк ăсчахсемпе специалистсен канашĕн ертӳçи:

- Пĕрлешӳ тилхепине иккĕмĕш çул тытса пыратăп. Пĕлтĕр плана кĕртнĕ мероприятисене пурне те пурнăçларăмăр. "Çулталăк аспиранчĕ", "Чи лайăх çамрăк ăсчах" конкурссем ирттертĕмĕр. "Çут çанталăк ăслăлăхĕн чи лайăх çамрăк учĕнăйĕ" ята И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ студентки Елена Соперовăпа И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУра вĕренекен Иван Бардасов тивĕçрĕç. "Техника ăслăлăхĕн чи лайăх çамрăк учĕнăйĕ" номинацире Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче ăс пухакан Ольга Михайлова çĕнтерчĕ. "Социогуманитари ăслăлăхĕн чи лайăх çамрăк учĕнăйĕ" ята Санкт-Петербург патшалăх экономика университечĕн Шупашкарти филиалĕн студентки Стелла Григорьева тивĕçрĕ. "Çулталăк аспиранчĕ" конкурсра тĕрлĕ номинацире Вероника Максимова /И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ/, Елена Архипова /"ВНИИР-Прогресс" АУО/, Алексей Самсонов /И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ/, Марина Романова /Шупашкарти кооперации институчĕ/, Елена Павлова /И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ/ мала тухрĕç. Аслă шкулсен хушшинче "Уçă лекци" фестиваль кăсăклă йĕркеленчĕ. Кăçал Çамрăк ăсчахсемпе специалистсен сайтне уçрăмăр. Унта наукăпа кăсăкланакансем валли кирлĕ хыпарсене вырнаçтарма тăрăшăпăр.

Надежда КОРСАКОВА, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн офтальмологи тата оториноларингологи кафедрин профессорĕ:

- Эпĕ куç чирĕсене тĕпчетĕп. Юлашки вăхăтра катарактăпа аптăраса суккăрланакан йышланчĕ, çавна май ĕçе ку енĕпе йĕркелеме тĕв турăм. Ăслăлăха, шел те, тухтăрта ĕçлеме тытăнсан тин кӳлĕнтĕм. 2008 çулта Раççейри çамрăк ăсчахсен Мускавра йĕркеленнĕ конференцийĕнче доклад хӳтĕлерĕм. Манăн ĕç унта 1-мĕш вырăн йышăнчĕ. Çĕнтерӳçĕсене квалификацие тӳлевсĕр майпа ӳстерме Мускава йыхравларĕç. Кунашкал чыса тивĕçнĕшĕн хĕпĕртерĕм. Халĕ 9-мĕш çул ĕнтĕ куç механизмне тишкеретĕп. Чире вăхăтра тупса палăртмалли майсене шыратăп. Тĕпчевсене чĕр чунсен куçĕпе усă курса тăватăп. 4 монографи кăлартăм, 77 статья хатĕрлерĕм. Тăватă патент хӳтĕлерĕм. Пĕлтĕр Раççей академийĕн президиумĕн йышăнăвĕпе мана ăслав аталанăвне пысăк тӳпе

хывнăшăн Альфред Нобель ячĕллĕ медальпе чысларĕç. Ăслăлăха студентсене явăçтарма тăрăшатăп. Вĕсем вĕренӳрен пушă чухне наука енĕпе тăрмашнăшăн савăнатăп, çитĕнĕвĕсем Чăваш Енре ăслăлăх пуласлăхĕ пуррине çирĕплетеççĕ.

Игорь КОЖАНОВ, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУн педагогикăпа яковлевоведени кафедрин докторанчĕ:

- Эпĕ поликультура воспитанийĕн ыйтăвĕсемпе ĕçлетĕп. Ăнланмалларах каласан - çамрăксене тĕрлĕ халăх çыннисемпе туслă пурăнмаллине вĕрентетĕп. Студентсене педагогика, этнологи, этнопедагогика енĕпе пĕлӳ паратăп. ЧР Çамрăк ăсчахсемпе специалистсен канашĕн нумаях пулмасть йĕркеленнĕ сайчĕн администраторĕн тивĕçĕсене пурнăçлатăп. Ăна кулленех çĕнетме тăрăшатăп. Çавăн пекех ЧППУн Çамрăк ăсчахсемпе студентсен канашне ертсе пыратăп. Тĕл пулусенче тĕрлĕ халăх хушшинчи хирĕç тăрусене сӳтсе яватпăр, ку енĕпе хам тишкернĕ материалсемпе паллаштаратăп.

Алексей ЕРЕМКИН, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн химипе фармацевтика факультечĕн деканĕн ăслăлăх енĕпе ĕçлекен çумĕ:

- Эпĕ çĕнĕ органика çыхăнăвĕсен синтезне тĕпчетĕп. Пурнăçра вĕсемпе эмел тума тата полимер ĕçĕ-хĕлĕнче усă курма май пур. Ăслăлăх сукмакне студент чухнех такăрлатма пуçларăм. Халĕ университетра вĕрентетĕп, аслă шкул çумĕнчи инновацисене пурнăçа кĕртме пулăшакан центр ертӳçинче вăй хуратăп. Ăслăлăх ĕçĕсемпе производствăра усă курмашкăн майсем шыратпăр. Декан çумĕ пулнă май студентсене грант тивĕçмелли конкурссене хутшăнтарма тăрăшатăп. “Химпромпа” тачă çыхăнса ĕçлесен ăслăлăх шайĕ татах ӳсĕччĕ.

**Любовь Петрова. Газета «Çамрăксен хаçачĕ». 2013. 8 февраля.**